# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: putpobedy.ru

электронлă адрессем:
press_vurnar@rchuv.ru
svetok11@mail.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ · 2025 çул кăрлач /январь/ уйăхĕн 18-мĕшĕ · шăматкун · 3/11850 № · Хакĕ ирĕклĕ


**ХАМĂРĂННИСЕНЕ ПĔЛĔР!**

## Маттуррисене – стипенди



Г.Костянецкая, А.Федоров, К.Данилова.

**Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев творчествăри ăнтăлушăн 1 пин çамрăка ятарлă стипендипе хавхалантарас Указа алă пуснă. Кăçал комисси 2062 заявкăна пăхса тухнă. Вăл шутра шкулта вĕренекен 681 ачана, ĕçлекен 205 çамрăка тата обществăлла пĕрлĕхсен 114 представительне стипенди уйăрнă. Ун виçи уйăхсерен 2500 тенкĕпе танлашать.**

Кăçал Вăрнар округĕнче пурăнакансем стипендиатсем шутне ытлараххăн кĕнĕ. Округри учрежденисенчен тăратнисем хушшинче саккăрăн. Вĕсем:

**Оксана Васильева** – Ярмушка шкулĕнче вĕренекен,

**Ксения Данилова, Галина Костянецкая** тата **Антон Федоров** – Вăрнарти 2-мĕш шкулта вĕренекенсем,

**Екатерина Игнатьева** – Вăрнар поселокĕнчи 3-мĕш «Ромашка» ача сачĕн воспитателĕ,

**Марина Михайлова** – Раççей ШĔМ-ĕн полицин «Вурнарский» пайĕн участокри уполномоченнăйĕ,

**Екатерина Трифонова** тата **Светлана Федотова** – Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн студенчĕсем.

Ку çамрăксенчен чылайăшĕн çитĕнĕвĕсем пирки вулакансем аван пĕлеççĕ. Антон Федоров, ак, спортра маттур. Галина Костянецкая – ăста ӳкерӳçĕ. Тĕрĕссипе, вĕренекенсем – пурте коллективсен хастарĕсем. Шкул-техникумăн обществăлла пурнăç аталанăвне вĕсем хăйсен шухăшне, вăхăтне чылай хываççĕ.



М.Михайлова.

Çавăн пекех стипендиатсен йышĕнче пирĕн маттур ентешсем татах пур. Вĕсемпе те эпир мухтанма тивĕç. Вăл шутра – Чăваш кĕнеке издательствинче тимлекен Пăртас хĕрĕ Ольга Иванова (Австрийская), «Хыпар» издательство çурчĕн фотокорреспонденчĕ, Хурăнсур Çармăс каччи Василий Кузьмин, Вăрнарти 1-мĕш шкултан вĕренсе тухнă хастар хĕр Танзиля Замалиева.



О.Васильева.

Пурне те чĕререн саламлатпăр! Маттур çамрăксем – пирĕн пуласлăх.

**Светлана ЧИКМЯКОВА**



Е.Игнатьева.



Е.Трифонова, С.Федотова.

## Çĕнĕ лауреат – Федор Кузьмин

**2005 çултанпа хаçат редакцийĕн коллегийĕ чăваш халăх писателĕн Анатолий Емельяновăн çуралнă кунĕнче ун ячĕллĕ преми лауреатне çирĕплетет. Кăçал ят-сума «Çĕнтерӳ çулĕн» Хурăнсур Çармăсри обществăлла корреспонденчĕ, Чăваш наци ăслăхакăлĕпе ӳнер академийĕн членĕ, таврапĕлӳçĕ Федор Григорьевич Кузьмин тивĕçрĕ.**




Ф.Кузьмин.

**ХИСЕП**

Редколлеги темиçе кандидатран Федор Григорьевича вăл пичет изданийĕпе нумай çул тачă çыхăну тытнăшăн, ăста çырнă статйисемпе, очеркĕсемпе вулакансене тăтăшах паллаштарнăшăн, паттăрлăх темине çутатассипе тĕллевлĕ тăрăшнăшăн суйласа илчĕ. Унăн кашни материалĕ вулакансен чĕрине хускатать. Хаçатра Федор Григорьевичăн вăрçă паттăрĕсемпе ĕç ветеранĕсен хастарлăхне, Вăрнар енчи ял хуçалăх производствин аталанăвне, ятлă-сумлă ентешсен пархатарлă кун-çулне халалланă чылай статья пичетленчĕ. Федор Кузьмин Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене çĕкленĕ çĕрте ĕçленисен списокне хатĕрлессипе те нумай вăй хучĕ. Тыл ĕçченĕсен тăванĕсем, тăван ен историйĕпе кăсăкланакансем хаçатăн çĕнĕ кăларăмĕсене чăтăмсăррăн кĕтрĕç, редакцине те кашни кун тенĕ пекех шăнкăравлатчĕç. «Вăрнарсем – ĕç фрончĕн паттăрĕсем» кĕнеке пиçсе тухнинче ун тӳпи пысăк.

Хальхи вăхăтра Федор Кузьмин хатĕрленĕ «Тăван çĕршывăн 1941–1945 çулсенчи Аслă вăрçинче хастар ĕçленĕшĕн» медале тивĕçнисен списокĕ хаçат страницисенче кун çути курать. Тĕпчев ĕçĕсенче архив документчĕсемпе туллин усă курать вăл. Таврапĕлӳçĕ тăван халăхăн кун-çулне тĕпчессипе хастар ĕçлет. Федор Кузьмина 2021 çулта Чăваш наци ăслăлăхĕпе ӳнер академийĕн президенчĕн хушăвĕпе Аркадий Айдак ячĕллĕ «Халăхшăн тăрăшнăшăн» орденпа наградăланă. Федор Кузьмин – «Хорнзор Çармăс ялĕ», «Хорнзор Çармăссен вĕçĕмсĕр историйĕ» (очерксем, асаилӳсем), «Кĕтнĕ салтаксем», «Хорнзор–Берлин 1941–1945» изданисен авторĕ те.

Федор Григорьевич анлă тавракурăмлă, ырă та сăпайлă, тӳрĕ кăмăллă та пултаруллă, ĕçшĕн çунакан тата тăван çĕре чунтан юратакан çын. Нумай çул «Хорнзор» кооператив тилхепине ăнăçлă тытса пынă, «Янгорчино» хуçалăх председателĕнче те тăрăшнă. Ăна «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ», «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятсемпе чысланă. Федор Григорьевич ертӳçĕ чухне ялсене хăтлăх кĕртессипе, «кăвак çулăм» çитерессипе, çамрăк специалистсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе тăрăшса ĕçленĕ. Культура, спорт мероприятийĕсене йĕркелессине те тимлĕхре тытнă, концертсене, спектакльсене хастар хутшăннă. Çамрăк чухнех литература лаççинче пултарулăха туптама пуçланă, драматурги хайлавĕсене çырнă. Ăна 2003 çулта Чăваш ен Патшалăх Канашĕн депутатне те суйланă, хăйĕн тивĕçне яваплăха туйса пурнăçланă. Аграри политики тата экологи енĕпе тимлекен комитетăн членĕ пулнă. Федор Григорьевич спорт мастерĕн кандидачĕ. Сывă пурнăç йĕркине паянхи кун та çирĕп тытса пырать. Йĕлтĕр спортне кăмăллать.

Федор Кузьмин «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатăн чи шанчăклă та çывăх тусĕсенчен пĕри. Вăл яланах пуян содержаниллĕ материалсемпе тивĕçтерет. Редакци коллективĕ Анатолий Емельянов ячĕллĕ премийĕн çĕнĕ лауреатне Раççей тата Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлать, яланах çирĕп сывлăхлă пулма, пултарулăхра малалла та çитĕнӳсем тума сунать.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

## Вычет илме пулать

**ÇĔНĔЛĔХ**

**Кăçалхи январьтен тытăнса ГТО нормативĕсене пурнăçлакансен налук вычетне илме май пур.**

Çакна шута хумалла: ГТО комплексне пурнăçланă çул диспансеризаци те тухмалла. Налук вычечĕн виçи çулталăкне 18 пин тенкĕпе танлашать. Çак суммăран шалуран НДФЛ тытмаççĕ.

Вычета ГТО-н Палăрту значокне пĕрремĕш хут тивĕçнĕ гражданскене е тепĕр хут нормативсене пурнăçлакансене тата унччен маларах илнĕ значок кăтартăвĕсене çирĕплетекенсене параççĕ.

Налук вычетне 2025 çулта налук тапхăрĕн кирек хăш уйăхĕнче (анчах ирĕке çирĕплетнĕренпе уйăхран маларах мар) параççĕ.

Çавăн пекех налук тӳлекен тепĕр çултан хăй тĕллĕн кăçалхишĕн 3-НДФЛ формипе декларации тăратса вычета илме пултарать. Ăна налук инспекцине каймасăрах **www.nalog.gov.ru** сайтра çырса тултарма пултарать.

Аса илтеретпĕр: çынсене сывă пурнăç йĕркипе туслаштарас ĕç «Физкультурăпа спорта аталантарасси» патшалăх программипе пурнăçланать. Ун тĕллевĕ – 2030 çул тĕлне пĕтĕм халăхăн 70 процентне тăтăш спортра пиçĕхекенсен ретне кĕртесси.



**ÇАНТАЛĂК**

| Вырсарникун 19.01 | Тунтикун 20.01 |
| --- | --- |
| 0 / -2 | -2 / -7 |
| **Ытларикун 22.01** | **Юнкун 23.01** |
| -8 / -10 | -6 / -3 |

«Яндекс погода» информацийĕ.

**УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ**

| Число | | 19.01 | 20.01 | 21.01 | 22.01 |
| --- | --- | --- | --- | --- | --- |
| Хĕвел | тухать | 08.06 | 08.05 | 08.03 | 08.02 |
| | анать | 15.56 | 15.58 | 16.00 | 16.02 |
| Кун тăршшĕ | | 07.50 | 07.53 | 07.57 | 08.00 |
| Уйăх тăхри | | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| кунĕ | | 20 | 21 | 22 | 23 |

# Кашни ыйту тимлĕхре пулĕ





**Çĕнĕ çулта Пĕрлехи информаци кунĕсем каллех старт илчĕç. Халăх патне çитермелли, уççăн сӳтсе явмалли темăсен шутне хальхинче те çивĕччисене кĕртнĕ: телефон шулĕкĕсенчен, интернетри ултавсенчен хӳтĕленесси; коммуналлă тивĕçтерӳсемшĕн тӳлевсем улшăнасси, шкулсенче тата ача сачĕсенче апат çитерессине йĕркелесси тата хĕлле çул-йĕре пăхса тăрасси.**

Вăрнар округĕнче юнкун Чăваш енри конкурентлă политика тата тарифсен патшалăх службин пуçлăхĕ Сергей Егоров ертсе пыракан ушкăн ĕçлерĕ. Кăçалхи пĕрремĕш тĕлпулусем Калинино тата Вăрнар территори пайĕсенче иртрĕç.

Вăрнарта, акă, информаци ушкăнĕ пысăк предприятисенчен пĕрин – «Чувашкабельмет» обществăн – ĕçченĕсемпе тĕл пулчĕ. Коллектив кунта активлă, округ пурнăçĕпе тимлĕ интересленет. Информаци кунĕн темипе те калаçăва хастар хутшăнчĕç, вĕсем тĕлĕшпе хăйсен шухăш-сĕнĕвĕсемпе те тухрĕç.

Кун йĕркинчи тĕп ыйту, паллах, пурне те хумхантарать. Çынсем мĕнпур укçи-тенкине те, кредит илсе те шулĕксене миллионшар тенкĕ таранах куçарса пани пирки пĕлменнисем-илтменнисем çук пулĕ халĕ. Анчах нумайăшĕ çакă хăйне нихăçан та пырса тивмест тесе шутлать.

– Мушенниксем питĕ чее. Вĕсем пĕччен ĕçлемеççĕ. Ултавçăсен ушкăнĕнче, – компьютер технологийĕн «ăстисем», питĕ ăслătăнлă, ĕнентерӳллĕ калаçакан специалистсем, çынсен психикине лайăх пĕлекенсем... Ултав серепине кирек кама çаклатма пултараççĕ. Шар курнисем хушшинче банк ĕçченĕсем хăйсем те, педагогсем те, темиçе аслă пĕлӳллĕ çынсем те... – асăрхаттарчĕ Вăрнар округĕн пуçлăхĕ Надежда Никандрова. Вăл мушенниксем чи анлă усă куракан схемăсем çинчен те каласа пачĕ.

Вăл пĕлтернĕ тăрăх, пĕлтĕр интернет сечĕпе усă курса тунă преступленисен шучĕ республикра 4128-а çитнĕ. Финанс тăкакĕ питĕ пысăк: 1,15 млрд тенкĕ енне. Нумай чухне шар курнисем укçа-тенке хăйсемех ярса панă е преступниксем, вăрттăн информацие ыйтса пĕлсе, вĕсен банк карттисенчен çаратнă.

Нимсĕр-мĕнсĕр юлассинчен асăрханулăх кăна çăлса хăварма пултарать. Çавăнпа та Надежда Валериановна пурне те тимлĕ пулма ыйтрĕ. Сирĕн персоналлă даннăйсене, банк реквизичĕсене, пароль-кодсене пĕлес текенсемпе, тĕрлĕрен службăсен ячĕпе шăнкăравлакансемпе калаçма кирлĕ маррине аса илтерчĕ. «Иккĕленӳ çуралчĕ-тĕк, ку службăсене, банка е полицие хăвăр шăнкăравласа пĕтĕм шикленĕве сирĕр. Палламан-пĕлмен çынсемпе калаçса ан тăрăр, сирĕн пуçа анратса яриччен тӳрех телефона сӳнтерĕр», – терĕ округ пуçлăхĕ. Çавăн пекех аслă ӳсĕмри ватă çынсене асăрхав кирлине уйрăммăн палăртрĕ. Ку ушкăнрисене, çулĕсене кура, ултала ма питĕ çăмăл – вĕсем кампа хутшăннине, калаçнине ачисен, мăнукĕсен тимлĕхрех тытмалла.

Коммуналлă тивĕçтерӳсен тарифĕсемпе инфраструктура çĕнетĕвĕ пирки те калаçу хĕрӳ пулчĕ. Мĕншĕн ӳстерме тивет-ха тӳлевсен виçисене? Çакă коммуналлă службăсен тикĕс, стабильлĕ ĕçне тивĕçтерме кирлине ăнлантарчĕ информушкăн ертӳçи Сергей Егоров. Тӳлевсем ЖКХ организацийĕсем валли энергоресурссен хакĕсем ӳснипе, коммуналлă инфраструктурăна юсама-модернизацилеме тăкакланнине кура пысăкланаççĕ-мĕн. Улшăнусем июлĕн 1-мĕшĕнчен пулмалла.

Шкулсенче вĕренекенсене тата ача сачĕн воспитанникĕсене вĕри апатпа тивĕçтернипе вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Алексей Фирсов паллаштарчĕ, ку ĕçе округра аван йĕркеленине палăртрĕ. Ача сачĕсенче (вĕсем – 8) кĕçĕннисем валли апата вырăнтах пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Шкулсенче (16) вара кӳрсе килеççĕ, ку тĕлĕшпе пĕрремĕш çул мар шанчăклă тимлекен уйрăм предприниматель яваплă. Каламалла, кĕçĕн класрисене тата льготăсем пуррисене тӳлевсĕр çитереççĕ. Вăтам тата аслăрах ӳсĕмрисемшĕн те хаксем килĕшӳллĕ, пысăках мар. Апат-çимĕç пахалăхĕ, пĕтĕм требованисемпе нормăсене пăхăнни – пĕрмаях тĕрĕслевре.

Округри çул-йĕре тивĕçлĕ шайра тытса тăрасси – яланах çивĕч ыйтусен шутĕнче. Ăна тĕлпулура та сӳтсе явнă май, «Чувашкабельмет» ĕçченĕсем те хăйсен пăшăрханăвĕсене пĕлтерчĕç. «Çуллахи вăхăтра çулсен айăккипе хытхура, çӳллĕ курăк ашкăрнине курма пулать», – терĕç пĕрисем. «Вăрнар поселокĕн урамĕсене симĕслентерсе илем кӳрессипе ытларах ĕçлемелле. Тавраллах чечек композицийĕсем, хӳхĕм клумбăсем куçа илĕртсен хамăрах ырă вĕт», – пулчĕ тата тепĕр сĕнӳ. Надежда Никандрова пуçлăх вĕсемпе килĕшрĕ. Ку самантсем тимлĕхрен тухманнине, кăçал тĕллевлĕрех ĕçлессине, подрядчиксенчен те çирĕпрех ыйтассине каларĕ. Урамсене те, культура çурчĕ çумĕнчи парка та малалла йĕрке кĕртессипе плансем пур-мĕн. Советски урамĕнчи шăтăклă-путăклă çул та пăшăрхантарать. «Кунта асфальт сийне çĕнетнипех ыйту татăлмасть, чи малтанах çула аркатакан шывсене кăларса ямалли мелсене шырамалла», – терĕ вăл. Çавăн пекех Надежда Валериановна ялсенче пурăнакансене хастарлăхшăн мухтарĕ. Поселокпа танлаштарсан вĕсем пуçарулă бюджет программинче питĕ активлă. Патшалăх пулăшăвĕпе пурнăçланакан проектсен пысăк пайĕ шăпах та çулсене юсассипе е çĕнетессипе çыхăннă.

Ытти проблемăллă ыйтусене те çĕклерĕç пухăннисем. Поселокри Мелиораторсен урамĕнче пурăнакансен ĕçмелли шыв тĕлĕшпе çивĕчлĕх пур, çăлсем çулсеренех ăшăхланнине калаççĕ. Уравăш плотинине йĕркене кĕртес ĕçсене хăçан пурнăçлĕç? Хытă каяшсене илсе тухнăшăн пурăнман çуртсенчен те мĕншĕн тӳлев хураççĕ? Çак тата ытти ыйтусене информаци ушкăнĕ пурне те тимлĕхе илчĕ.

Информаци кунĕнче ĕç коллективĕпе МЧС тата газпа тивĕçтерекен служба сотрудникĕсем те тĕл пулчĕç. Вĕсем пухăннисене инкексинкексенчен сыхланмалли, килçуртра та, ĕç вырăнĕнче те хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмалли, газ оборудованийĕпе асăрханулă усă курмаллине аса илтерчĕç.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

## Саламлатпăр!



50 çул – мăшăрлă пурнăçăн чи пĕлтерĕшлĕ пулăмĕсенчен пĕри. Кăрлач уйăхĕн 18-мĕшĕнче **Пăртас ялĕнчи Любовь Ефремовнапа Геннадий Николаевич ИВАНОВСЕН** çемйи ылтăн туя паллă тăвать. Эпир вĕсене çак сумлă уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Сире çурхи хĕвел пек ырă кăмăл, çăлкуç пек тапакан вăй, инçе çул пек вăрăм ĕмĕр, тăнăçлăхпа иксĕлми телей сунатпăр. Кашни утăм ырлăхпа, юратупа, çутă ĕмĕтсемпе тултăр. Малашне те пурнăçăн анлă сукмакĕпе çирĕппĕн те мал ĕмĕтлĕн утма сире Турă ырлăх-сывлăх, пархатарлă кун-çул пиллетĕр. Геннадий Николаевичпа Любовь Ефремовна çемье çавăрма пултарнипе пĕрлех унăн вучахĕн ăшшине те нумай çуллăха упраса хăварнине палăртма кăмăллă.

**Кумаляковсен, Волковсен, Ивановсен тата Кораблевсен çемйисем.**





Кăрлачăн 18-мĕшĕнче пирĕн хаклă çыннăмăрсем – **Геннадий Николаевичпа Любовь Ефремовна ИВАНОВСЕМ** – алла-аллăн тытăнса, пĕрлешсе çемье çавăрнăранпа 50 çул çитет. Эпир хисеплĕ мăшăра ылтăн туй ячĕпе ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçăн анлă та вăрăм сукмакĕпе малалла та пĕрле хастаррăн утма юман пек çирĕп, ирхи сывлăм пек таса сывлăх, çăлкуç пек иксĕлми тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Кил-йышра килĕшӳ, татулăх пултăр, çывăх çынсен юратăвĕпе тимлĕхĕ чунчĕрене ăшăтса тăтăр.

*Çитнĕ ĕмĕт вăй-хал кӳтĕр, сиртĕр йывăр кунсене.*
*Чун ăшши нихçан ан сӳнтĕр сирĕн хĕрӳ чĕресенче.*

**Салампа – Афанасьевсем, Егоровсем, Александровсем, Ефимовсем.**

Хаклă та хисеплĕ çыннăмăрсене – **Санарпуçĕнче пурăннă йăхран тухнă Любовь Ефремовнапа Геннадий Николаевич ИВАНОВСЕНЕ** – сумлă уявпа – пĕр-пĕрне килĕштерсе пурнăç çулĕпе пĕрле утма пуçланăранпа 50 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Малашне те телей-савăнăçне, хуйхи-суйхине пĕрле пайласа, пĕрпĕриншĕн шанчăклă тĕрек пулса тата нумай çул пурăнма аслă вăрманта кашласа ларакан чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, нихăçан иксĕлми вăй-хăват, хуркайăк çулĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, ĕмĕтленни килсех тăтăр. Çумра яланах сире ырă сунакан, хисеплекен тата юратакан çынсем пулччăр. Кашни çĕнĕ кун ыррипе лайăххине çеç илсе килтĕр.

*Ылтăн туй ячĕпе саламлатпăр чунтан. Шутлани пурнăçа кĕрсе пытăр ялан.*
*Ĕмĕр çулĕ чĕнтĕр малтан малалла, çитме сунатпăр 100 çула.*

**Санарпуçĕнче, Çĕньял Хапăсра пурăнакан Филимоновсен çемйисем, тăванĕсем.**



**Пуканкасси ялĕнчи** ятлă-сумлă **ИВАНОВСЕН** çемйинче 72 çул каялла, кăрлачăн 18-мĕшĕнче, сар хĕвел пек ăшă, кăмăллă, пăрчăкан пек вăр-вар та ĕçчен, çырла пек хитре сăн-питлĕ хĕрпĕрчи çуралнă. Ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем ăна юратса Нина тесе чĕннĕ. Кунсем-çулсем хăвăрт иртрĕç. Акă **Нина Афанасьевна ТЕРЕНТЬЕВАН** черетлĕ çуралнă кунĕ те çитрĕ. Вăл сăвăсем çырма хастар тата ал ĕç ăсти. Юрраташша кăмăллать, «Утмăлтурат» ушкăна çӳрет. Нина, сана çуралнă кун ячĕпе чĕререн саламлатăп, мăнаçлă Атăл шывĕ пек вăрăм ĕмĕр, хурçă пек çирĕп сывлăх сунатăп, сăн-питрен йăл кулă нихăçан та ан татăлтăр. Ачусемпе мăнукусем хисеплеччĕр, юратчăр. Эсĕ хитре, илемлĕ, пултарулă, ĕçчен, кăмăллă чăн чăваш хĕрарăмĕ.

**Ырă сунса, хисеплесе – Лена Владимирова.**



Юратнă атте, кукаçи, асатте – **Уравăш ялĕнче пурăнакан Павел Яковлевич СЕМЕНОВ** – кăрлач уйăхĕн 20-мĕшĕнче 92 çул тултарать. Çуралнă кун ячĕпе ăна чун-чĕререн саламлатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнма çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.

*Çул хыççăн çул иртсе хыçа юлсан та,*
*Эс уншăн ан кулян, ан пăшăрхан.*
*Пул сывлăхлă ялан, çапла пулсассăн –*
*Укçаллă этемрен те эс пуян.*

**Салампа – ывăлĕ, хĕрĕсем, кинĕ, 14 мăнукĕ, 14 кĕçĕн мăнукĕ.**



Пирĕн чи çывăх та хаклă çыннăмăра – **Канаш округĕнчи Аслă Мами ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ те çавăнтах пурăнакан, Вăрнарти хутăш препаратсен заводĕнче, «Çеçпĕл» ача садĕнче ĕçленĕ Валентина Алексеевна СЕМЕНОВАНА** – 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, тулăх пурнăç, иксĕлми вăй-хал, ăнăçу сунатпăр. Телей санпа пĕр çулпа уттăр. Яланах хаваслă, чунупа çамрăк пул. Чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр пирĕн тăван кил ăшшине упраса нумай çул пурăнмалла пултăрччĕ санăн. Ачусем хисеплеччĕр, мăнукусем юратчăр, ял-йыш сума сутăр.

**Салампа – йăмăкĕсем, ачисем, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**



Юратнă та хаклă çыннăмăра, ывăла, мăшăра, аттене – **Пуканкассинче çуралса ӳснĕ Алексей Дмитриевич МАЛОВА** – январĕн 19-мĕшĕнче 35 çул тултарнă ятпа ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе малашне те çĕнте-рӳллĕн утма, çĕнĕ ӳсĕм-çитĕнӳсем тума таса та çирĕп сывлăх, çăлкуç таппиллĕ вăй-хал, иксĕлми телей-савăнăç, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Çумăнта яланах юратнă çыннусем, шанчăклă тус-юлташусем пулччăр, йывăрлăхсене парăнтарма хавхалантарччăр. Ырри çумне ырри хушăнсах тăтăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

*Ĕмĕр çулĕ вырттăр инçете.*
*Телейпе çуталтăр чун-чĕре.*
*Савăнар пĕрле кĕрекере,*
*Çирĕп сывлăх пултăр ĕмĕре.*

**Амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, çывăх тăванĕсем, юлташĕсем.**

# Халăх кӳрекен пулăшу усă паратех...

Вăрнар тăрăхĕнчен ятарлă çар операцине пулăшу тăтăшах ăсанать. Ял çыннисем те пĕрлехи ĕçе май пур таран хăйсен тӳпине хывма тăрăшаççĕ. Хирпуç тăрăхĕнче пурăнакансем те Çĕнтерӳшĕн хытах тимлеççĕ. Çак эрнере вĕсем патĕнче пулма тӳр килчĕ



Хирпуç тăрăхĕн хастарĕсем.

## ПĔРЛĔХ

Ыттларикун вĕсем станок çинчен шăпах та «юбилейлă» 60-мĕш сеткăна антарчĕç. Ăна куç умĕнче çыхса пĕтернĕрен, маçтăрсен ăсталăхĕнчен, хăвăртлăхĕнчен питех те тĕлĕнтĕм. Аллисем ĕçе чăннипех хăнăхнă – выляса кăна тăраççĕ: сеткăн тăваткалĕсем хупланса та хупланса пыраççĕ.

Хирпуçсем çĕнтерӳллĕ ĕçе пĕлтĕрхи март уйăхĕнчен тытăннă. Çулталăк вĕçлениччен туслă ушкăн 33 хӳтĕлев сечĕ çыхнă тата 678 окоп çурти хатĕрленĕ.

Тăрăшакансем нумайăн. Ĕçе килнĕ пек кашни кунах ирпе ирех клубра пуçтарăнаççĕ вĕсем. Хăшĕсен мăшăрĕсем, ывăлĕсем, шăллĕсем ятарлă çар операцийĕнче çапăçаççĕ. Ытларахăшĕн вара фронтра никам та çук, апла пулин те вĕсем пархатарлă ĕçрен пĕр кун та юлмаççĕ. «Эпир пурте миршĕн, пирĕн çĕршывра, пĕтĕм тĕнчипе туслăх хуçалантăр, ачасем телейлĕ пулччăр»,– теççĕ вĕсем.

Шăкăл-шăкăл калаçнăçем ĕç ӳсĕнсе те ӳсĕнсе пырать. Хĕрарăмсем политикăна ытла кĕрсе каймаççĕ, кил хуçалăхĕ, ачисем, çемье пирки калаçаççĕ. Тепĕр чухне музыка çемĕпе тимлеççĕ вĕсем. Ытларах вара – хăйсем юрăсем шăрантараççĕ. Кĕвĕ-çемĕ кăмăла çĕкленине пытармаççĕ. «Çĕнтерӳ çулĕнчи» статьясене те сӳтсе яваççĕ. Сетка çыхма çӳрекенсенчен пурте тенĕ пек хаçат çырăннă. Почтальонка та вăхăт тупса тăтăшах салтаксене пулăшас ĕçе хастар хутшăнать.

Хирпуç, Рункă ялĕсен тыл паттăрĕсене те ятранах асăнас: Лидия Харитонова, Зоя Васильева, Ирина Никифорова, Вера Краснова, Оксана Давыдова, Альбина Семенова, Зоя Никифорова, Любовь Александрова, Елизавета Георгиева, Людмила Васильева, Мария Мышкина, Надежда Михайлова, Валентина Феофанова, Валентина Краснова, Валентина Спиридонова, Ольга Никифорова, Зоя Тимофеева, Алина Илларионова, Альбина Николаева, Фаина Романова, Роза Платонова, Людмила Кузьмина.

– Çĕнĕ çул каникулне те тухăçлă ирттертĕмĕр, хастарсем тăршшĕпе канса ларас мар терĕç. Уяв кунĕсенче 15 сетка çыхрăмăр. Вĕсене тунтикун «Находкăна» кайса леçрĕмĕр. Сетка çыхнипе пĕрлех окоп çуртисем хатĕрлес ĕç те пырать, – пĕлтерчĕ йĕркелӳçĕсенчен пĕри Алина Илларионова.

Вĕсем çыхнă сеткăсене фронтри ентешĕсем те ырлаççĕ. «Видео ярса патăмăр та шанчăклă хӳтĕлев пулнине çирĕплетрĕç»,– терĕç волонтерсем. Хальхи çыху мелĕ уйрăмах çирĕп пулса пынине палăртрĕç вĕсем. Тĕсĕсене те çар операцийĕ вырăнĕнчи çанталăка кура суйлаççĕ.

Маларах хирпуçсем 13 метр тăршшĕллĕ сеткăсем хатĕрленĕ. Халĕ ытларах – 6 метр çурăллисем. «Материал пĕтсен ахаль ларас килмест. Кун пек чухне кӳршĕлле Канаш округĕнчи Ачча ялĕнчен кивçенле кайса илетпĕр. Çĕрпелсем те пулăшнăччĕ. Ытти пунктсемпе те тачă çыхăнса ĕçлетпĕр», – кăмăллăн пĕлтереççĕ вĕсем. Каникул вăхăтĕнче, ак, окоп çурти валли банкăсене Калинино шкулĕнчен кайса илнĕ. Вăрнарти столовăйсем те банкăсене волонтерсем валли пуçтарса пыраççĕ.

– Иртнинче «ZOV Вурнары» ушкăн Вăрманкас каччине, отпускран çар службине вырăнне таврăннăскере, гуманитари пулăшăвĕ парса янăччĕ. Фронтри сăнӳкерчĕкре хамăр çыхнă сеткăна курсан питех савăнтăм, хĕрсене те каласа хавхалантартăм. Эппин, эпир тăвакан ĕç усă паратех», – терĕ Алина Илларионова.

Вăл сетка çыхма çӳрекенсене кăна мар, пĕтĕм ялйыш ячĕпе те ырă сăмахсем каларĕ. СВО валли пулăшу кирлĕ чухне кашниех тенĕ пек укçа-тенкĕпе пулăшма тăрăшнине палăртрĕ. Пĕлтĕр хирпуçсем фронт валли посылкăсем те ăсатнăччĕ, вĕсене нуски-алсиш, кĕпе-тумтир, апат-çимĕç тултарнăччĕ. Çакă ĕнтĕ вăл пĕрлĕх.

Çĕнĕ çул умĕн вара Хирпуçĕнчи культура çуртĕ республикăри акцие хутшăннă. «Ачасемпе салтаксем патне çырусем çыртăмăр, пĕрле нускисем, пылак çимĕç чикрĕмĕр. Кашни çыруне вуларăм. Ачасем кашни сăмахне витĕмлĕ çырнă. Вуланă чухне куççуль те тухрĕ. Кĕçĕннисем те лару-тăрăва ăнланни савăнтарать»,– терĕ Алина Николаевна.

Хирпуçсем те ытти çĕрти пекех Çĕнтерӳ Раççей çарĕн аллинче пултăр тесе чарăнми тăрăшаççĕ. Кашни маскировка сетки салтаксен пурнăçне çăлтăр тесе кĕл тăваççĕ. Пулăшу кунран кун ӳссе пырать.

**Светлана ЧИКМЯКОВА**

# Ĕç-хĕлĕ лайăх хаклава тивĕçнĕ

## ПĔТĔМЛЕТӲ

**Çĕнĕ çул пуçламăшĕ – иртсе кайнă çулталăкри ĕçе тишкерме, малашлăх плансене шутлама вăхăт. Урăхла каласан, çитĕнӳсемпе ӳсĕмсене палăртма, çитменлĕхсене вара пĕтерме майсем шырама. Раççей Шалти ĕçсен министерствин «Вурнарский» пайĕн коллективĕ те кĕçнерникун 2024 çулти оперативлă служба ĕç-хĕлĕн кăтартăвĕсене пĕтĕмлетрĕ.**

Канашлăва Чăваш Республикин ШĔМ-ĕн Экспертпа криминалистика центрĕн ертӳçи Александр Сергеев, Вăрнар округĕн пуçлăхĕн заместителĕ Алексей Фирсов тата Вăрнар район прокурорĕ Сергей Парамонов хутшăнчĕç.

Пĕтĕмлетӳллĕ мероприяти савăнăçлă самантран пуçланчĕ. «Вурнарский» пайăн ГИБДД уйрăмĕн инспекторĕсем Василий Михайлов тата Александр Димитриев службăри тивĕçĕсене пурнăçлассипе пĕлтĕр республикăра чи лайăххисен шутне кĕнĕ. Вĕсене пай пуçлăхĕ Руслан Минуллин Кубоксемпе наградăларĕ.



Р.Минуллин, В.Михайлов, А.Димитриев.

Каламалла, муниципалитетсем хушшинчи «Вурнарский» пай пĕтĕмĕшле те ĕç-хĕлĕн чылай енĕпе кăтартуллă тимленипе мухтанма пултарать. Министерство хаклавĕпе, вăрнарсем мĕнпур территориаллă органсем хушшинче республикăри рейтингра малта. Çакă, чăн та, округри йĕрке хуралçисен çитĕнĕвĕсен çирĕплетĕвĕ.

Пĕлтĕрхи оперативлă служба ĕç-хĕлĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе вара «Вурнарский» пай пуçлăхĕ Руслан Минуллин тĕплĕн паллаштарчĕ. Оперативлă лару-тăрăва çирĕп асăрхавра тытнине, акă, иртнĕ çул регистрациленĕ преступленисен шутне 3,7 процент чакарма май килни те кăтартать. Преступленисене уçса парассин шайĕ вара ку тапхăрта 68,8 процентпа танлашнă.

Обществăлла вырăнти тата урамсенчи лару-тăру та тĕрĕслевре тухмасть. Йышăннă профилактика мерисем киревсĕр ĕçсене 31-рен 20-е çити чакарма май панă.

Пĕлтĕр экономика сферинчи преступленисене унччензинчен ытларах (19) тупса палăртнă. Вĕсенчен 12-шĕ – коррупци сĕмĕллисем. Çавăн пекех наркотиклă, психотроплă веществосене сарассине хирĕç тăрассипе тĕллевлĕ ĕç пурнăçланать. Ку енĕпе 14 преступление шута илнĕ. Саккунсăр çаврăнăшран наркотиклă веществосене 21 кг ытла кăларнă. Административлă право йĕркине пăснăшăн та 17 çынна явап тыттарнă.

Ĕç-хĕлти аван кăтартусенчен пĕри – çынсене вĕлернĕ (60%) тата сывлăхĕсене юриех йывăр сиен кӳнĕ тĕслĕхсене (40 %) чакарма пултарни. Ку тĕлĕшпе лару-тăрăва лайăхлатма çемьере, йăлара çапăçакансемпе-хирĕçекенсемпе, саккуна пăсма туртăм пуррисемпе асăрхаттару мероприятийĕсене витĕмлĕ ирттерни те пулăшнă. Тата, каламалла, ӳсĕрле тунă киревсĕр ĕçсем виçĕмçулхинчен сахалрах (57 тĕслĕх). Çакă та аван кăтарту, мĕншĕн тесен нумай чухне эрех ĕçсе «каппайланни» саккуна пăсма хĕтĕртет.

Руслан Минуллин çавăн пекех тимлĕхе вăйлатмалли ыйтусем çинче те чарăнса тăчĕ. Çав шутра – преступленисене уçса парас, следстви мероприятийĕсен пахалăхне ӳстерес, çул-йĕр инкекĕсене асăрхаттарас тата ытти тĕлĕшпе те.

Республикăри ШĔМ-ĕн ЭКЦ ертӳçи Александр Сергеев та округри йĕрке хуралçисен пĕлтĕрхи ĕç-хĕлне пĕтĕмĕшле лайăх хак пачĕ. Малалла та çитнĕ шайран чакмасăр, хăшпĕр направленисемпе кăтартусене татах та лайăхлатса тимлеме сунчĕ.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

# Надежная опора государства

## 12 января отметили 303-ю годовщину со дня образования прокуратуры РФ

**Указанная дата выбрана не случайно. Именно 12 января 1722 года именным указом Петра Великого при Правительствующем сенате был впервые учреждён пост Генерал-прокурора и возник институт российской прокуратуры.**


С.Парамонов.

Данное ведомство всегда являлось надежной опорой государства, твердо отстаивающее принципы законности и правопорядка. Лучших представителей прокурорского корпуса всегда отличали высокая компетентность, верность служебному долгу и личная порядочность. Настоящий сотрудник прокуратуры никогда не имел и не имеет право оставаться равнодушным к нарушениям закона и прав граждан.

Сфера деятельности российской прокуратуры очень обширна. Основными функциями прокуроров являются надзор за исполнением законов и соблюдением прав граждан, уголовное преследование, координация деятельности правоохранительных органов по борьбе с преступностью, участие в различных видах судопроизводства, в правотворческой деятельности, рассмотрение обращений.

Всего по результатам проведенных прокуратурой Вурнарского района в 2024 году проверок выявлено 1061 нарушение закона, из них в сфере трудового законодательства – 78, в сфере оплаты труда – 42. Проверки деятельности хозяйствующих субъектов показали, что нарушения конституционного права граждан на оплату труда продолжают иметь место, в связи с чем принимаются все предусмотренные законом меры прокурорского реагирования. Наиболее строгими мерами являются привлечение руководителей предприятий, имеющих задолженность по заработной плате, к административной и уголовной ответственности. За 2024 год по фактам нарушения трудового законодательства к административной ответственности привлечено 8 должностных лиц, 1 лицо – к уголовной ответственности.

В сфере природоохранного законодательства выявлено 50 нарушений, в целях устранения которых в адрес руководителей предприятий вынесено 19 представлений. По результатам их рассмотрения нарушения устранены, 10 должностных лиц привлечены к дисциплинарной ответственности, 2 лица – к административной ответственности.

На контроле и исполнение законодательства о противодействии коррупции. Выявлено 31 нарушение закона, принесено 9 протестов на незаконные нормативные правовые акты органов местного самоуправления, внесено 12 представлений об устранении нарушений антикоррупционного законодательства, 58 лиц привлечено к дисциплинарной ответственности, 1 лицо – к административной ответственности.

Всего за 2024 год рассмотрено 612 обращений, 564 из которых разрешено непосредственно прокуратурой, из них 143 признаны обоснованными, по ним приняты исчерпывающие меры прокурорского реагирования, вплоть до обращения в суд с исковыми заявлениями.

Прокуратурой на постоянной основе осуществляется взаимодействие с органами местного самоуправления округа, позволяющее устранять противоречия закону в нормативных актах еще на стадии их принятия. Всего в прошлом году в прокуратуру поступил 201 проект нормативных актов, по результатам проверки в органы местного самоуправления направлено 16 отрицательных заключений.

Хотелось бы отметить, что в прокуратуре Вурнарского района сложился энергичный профессиональный коллектив, состоящий из ответственных и неравнодушных людей, как опытных, так и молодых, которые бережно хранят и приумножают профессиональные традиции.

Я от всей души поздравляю коллектив прокуратуры Вурнарского района, а также ее ветеранов! Желаю сотрудникам успехов в этой ответственной работе, профессионального роста, здоровья, семейного благополучия и всего самого наилучшего.

**Сергей ПАРАМОНОВ,**
**прокурор района,**
**старший советник юстиции**

**СЛУЖБА ПО КОНТРАКТУ**




**400 тыс. руб. единовременно (при заключении контракта на срок от года и более);**

**1 400 000 руб. единовременно (региональная денежная выплата);**

**от 210 тыс. руб. в месяц (в зависимости от воинского звания, должности и выслуги лет).**

**По вопросам контрактной службы можно обратиться по адресу: п.Вурнары, ул.Советская, д.20 (администрация округа), каб. 307 с 8 до 17 часов. Тел. 8(83537) 2-51-87, в военный комиссариат по Ибресинскому и Вурнарскому районам.**

**Т. 8-937-397-30-09 (круглосуточно).**

# Список лиц, представленных к вручению медали «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945 г.г.»

*(Продолж. Начало в №77–80, 82–93, 1–2)*

**По Кольцовскому ордена Ленина колхозу им. Ленина**

Милицкова Клавдия Алексеевна
Милицков Николай Алексеевич
Милицкова Матрена Федоровна
Мишанина Татьяна Васильевна
Миронов Кирилл Федорович
Милицков Алексей Дмитриевич
Мишанина Евгения Романовна
Миронова Серафима Анатольевна
Мишанина Вера Федоровна
Михайлова Евгения Филипповна
Миронова Антонина Кузьминична
Нараткин Николай Иванович
Нараткин Петр Гурьевич
Нараткина Евдокия Федоровна
Нараткина Вера Петровна
Нараткин Александр Петрович
Нараткина Анисия Егоровна
Никулина Анна Тимофеевна
Нараткина Марфа Николаевна
Нараткина Александра Ивановна
Нараткина Графиня Ивановна
Нараткин Иван Александрович
Наумова Валентина Федоровна
Нараткин Иван Васильевич
Никулина Екатерина
Озябкина Анна Петровна
Озябкин Павел Петрович
Оленина Матрена
Оленина Анна Ивановна
Озябкина Татьяна Михайловна
Оленина Марфа Васильевна
Оленина Александра Васильевна
Онякин Николай Иванович – трудармия, г.Алатырь
Першуткина Парасковья Николаевна
Першуткин Александр Кузьмич
Першуткина Евдокия Павловна
Попкова Валентина Тимофеевна
Попкова Елизавета Николаевна – 1913 г. – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Першуткина Анастасия
Палькова Мария Яковлевна
Першуткина Екатерина Андреевна
Першуткина Наталия Петровна – 1926 г. – мобилизована на торфоразработку в Ивановскую область
Першуткин Александр Федорович
Палькова Анна Андреевна
Пупина Евдокия Осиповна
Пашина Евдокия
Першуткин Павел
Попков Николай – мобилизован по вывозке топ. дров для ж/д транспорта
Пупина Евдокия Павловна
Попков Тимофей
Першуткина Аксения Михайловна
Першуткина Елизавета Петровна – 1923 г. – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Першуткина Анна Петровна
Першуткина Татьяна Никоноровна
Павлунин Михаил Николаевич
Першуткина Александра Кузьминична
Першуткин Павел Семенович – 1884 г. – мобилизован на лесозаготовку – возчик
Першуткина Ольга Григорьевна
Сурова Дарья Абрамовна
Ситухина Александра Николаевна
Сурова Анастасия Михайловна
Сидоркин Геннадий Ефремович
Салмина Анастасия Ивановна
Ситухин Павел Михеевич
Ситухина Пелагея Федоровна
Ситухина Фекла Яковлевна
Сатеева Анна Кузьминична
Сатеева Варвара Семеновна
Сидухина Анастасия Андреевна
Сидухин Иван Егорович – подросток
Сурова Перасковья
Суров Александр Андреевич – подросток
Сатеева Ира Николаевна
Салмина Аксинья Николаевна
Саканина Александра Петровна
Саканин Иван Петрович
Сидоркина Ольга Даниловна
Саканин Петр Семенович
Ситухина Клавдия Алексеевна – 1924 г. – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Ситухин Александр Александрович
Степашина Александра Дмитриевна
Суров Иван Семенович
Суров Николай Семенович
Сидухина Клавдия Федоровна – 1924 г. – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Сурова Рима Ивановна
Сидоркина Дарья Васильевна
Саканина Елизавета Степановна
Саканина Валентина Михайловна
Ситухин Николай Павлович
Сатеева Серафима – 1922 г. – мобилизована на торфоразработку в Ивановскую область
Сатеев Александр Данилович
Ситухина Анастасия Андреевна
Саканина Александра Петровна
Саканин Степан
Саканина Марфа Степановна
Сурова Анастасия
Ситухина Наталья Федоровна
Степашина Степанида Васильевна
Трошкин Иван Васильевич
Талаев Сергей Иванович
Талаева Евдокия Ивановна
Трошкина Екатерина Павловна
Трошкина Анастасия Павловна
Тимофеева Ксения
Трошкина Мария Михайловна
Талаева Пелагея Александровна
Табинова Пелагея Васильевна
Трошкина Евдокия Васильевна
Трошкин Николай Павлович
Табинова Антонина Ефремовна
Трошкина Анна Михайловна
Талаева Александра Павловна
Филянина Зинаида Матвеевна
Филянина Перасковья Васильевна
Фролова Александра Андреевна
Фролова Варвара Кузьминична
Хлянова Домна Михайловна
Хлянова Наталья Михайловна – 1920 г. – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Храмова Евдокия Федоровна
Храмова Матрена Хрисановна
Храмов Александр Хрисанович
Хлянова Вера Анисимовна
Хлянова Александра Семеновна
Хлянов Тимофей Петрович
Хлянова Елена
Храмкин Иван Иванович
Хлянова Клавдия Матвеевна
Храмова Анна Степановна
Хлянова Татьяна Андреевна
Храмова Дарья Ивановна
Храмова Таисия Кирилловна
Хлянов Анисим Васильевич
Хлянова Наталья Ивановна – подросток
Хлянова Клавдия Андреевна
Храмкина Анна Павловна
Хлянова Клавдия Матвеевна
Храмова Евдокия Михайловна
Хлянов Семен Егорович
Чигирова Пелагея Петровна
Чураков Петр Максимович
Чигирова Ольга Павловна
Шалин Василий Михеевич
Шалина Нина Васильевна
Шумин Федор
Якимова Екатерина Павловна
Якимов Андрей Кириллович
Якимов Максим Петрович
Якимова Ольга Павловна
Якимова Анастасия Петровна
Якимова Татьяна Даниловна
Яковлева Евдокия Васильевна


Шамбова (Яковлева) Клавдия Яковлевна. Буртасы


Смирнова Мария Михайловна.


Исаева Клавдия Димитриевна. Чириш Шинеры

**По Мамалаевскому колхозу им. Ворошилова**

Алексеева Мария Ефремовна – колхозница
Александрова Роза Александровна – техничка
Арсентьева Татьяна Ивановна – Афанасьева Перасковья Ивановна – колхозница
Андреева Евдокия Андреевна – 1926 г. – скотница, мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Архипова Вера Матвеевна – колхозница, вдова
Александров Егор Александрович – колхозник
Архипова Мария Степановна – колхозница
Андреева Ольга Андреевна – ученица – сирота, молодая колхозница

**От редакции: Уважаемые подписчики! Если у ваших родных из данного списка лиц имеются фотографии, просим их принести или отправить в редакцию: по эл.почте press_vurnar@rchuv.ru, svetok11@mail.ru, по Телеграм, Ватсап, Вайбер по тел. 89373722600.**

**Список исследован краеведом из д.Хорнзор Федором КУЗЬМИНЫМ**

*(Продолжение следует)*

# Авалхи йăх-несĕлсен йĕрĕпе...

**Нумаях пулмасть Шупашкарти Чăваш наци музейĕнче «Авалхи йăхсен йĕрĕпе. Мăньял Хапăсри пирĕн эрăн 2–3-мĕш ĕмĕрĕсенчи авалхи масарĕнче irttернĕ археологи тĕпчевĕсен пĕтĕмлетĕвĕсем» ятпа курав ĕçлеме пуçланă. Археологсем тупнă япаласем мордва халăхĕн ĕлĕкхи пурнăç йĕркине сăнлать теççĕ.**



## ТĔПЧЕВ

– Вăтам Çавал тăрăхĕнче Мăньял Хапăспа Пăртас хушшинче вырнаçнă авалхи масар – пирĕншĕн чăн-чăн тупра, пĕлтерĕшлĕ археологи палăкĕ. Мордвасен историйĕн малтанхи тапхăрĕсене, вĕсем ытти халăхсен культурине епле витĕм кӳнине тĕпчеме май парать, – тенĕччĕ мордва экспедицийĕн ертӳçи Валерий Гришаков темиçе çул каялла пирĕн тăрăха археологи шыравне килнĕ чухне.

Каламалла, экспедицие мордвасем Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука сотрудникĕсем чĕннипе килнĕ, икĕ наци çыннисем пĕрле хутшăнса 2012–2017 çулсенче авалхи масар историне тĕпченĕ. Унта хĕрарăмсен тĕрлĕ капăрлату-илемлетӳ хатĕрĕсене чавса кăларнă: шăрçа, çĕрĕ, сулă, алка, мăй çыххи тата ыттисем. Вилтăприсенче тумтир пайĕсене те, тăмран ăсталанă япаласене те тупнă. Арçын вилтăприйĕсенче хĕçпăшал та – хĕç, сăнă, пуртă, кинжал тата ытти те – чавса кăларнă. Шырав вăхăтĕнче кăларнă пур япалапа та куравра паллашма пулать. Кунта 2–3-мĕш ĕмĕрсенчи савăтсапа та тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Мордва халăхĕн йăли-йĕркипе этеме пытарнă чух вилтăприне пăтă янă куршак та хунă, леш тĕнчере те çын тутă çӳрет, тенĕ.

Археологи тĕпчевĕсем ĕлĕкрен мордвасемпе чăвашсем кӳршĕллĕ пурăннине çирĕплетеççĕ. Халăхсен культурипе йăли-йĕрки те пĕр-пĕрне витĕм кӳнĕ.

**Елена ТОЛСТОВА**

# Пултарулăхĕ нумай енлĕ

ХАМĂРĂННИСЕНЕ ПĔЛĔР!

**Вăрнарти искусство шкулĕнче вĕрентекен Елена Есенцевана «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. Указа республика Пуçлăхĕ Олег Николаев 2024 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче алă пуснă.**



*Е.Есенцева.*

Елена Николаевна – талантлă, пултаруллă педагог. Нумай çул вăл ачасене ӳнер тĕнчин вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарать, илемлĕхе туйма, курма вĕрентет, ăсталăха туптаса аталантарма пулăшать. Вĕрентӳ процесне кăсăклă йĕркелет, тĕрлĕ мелсемпе, меслетсемпе ăнăçлă усă курать. «Пленэр», «Скульптура», «Живопись», «Ӳкерчĕк» тата ытти вĕрентӳ программисен соавторĕ.

Маттур педагогăн пултарулăхĕ нумай енлĕ: вăл тĕрлĕ техникăпа илĕртӳллĕ пуканесем ăсталать, пусма çине ӳкерессипе, халăх алăсталăхĕпе интересленет. Çавăн пекех Елена Николаевна – тĕрĕ ăсти те. Вăл – «Сурпан Пĕрле» акци (2020 ç.) валли Вăрнар районĕнчен пĕр сыпăка тĕрлекенĕ. Вăрнар районĕн тĕрленĕ карттин авторĕ тата ăна илемлĕ эреше çавăраканĕ («Вăрнар районне тĕрлетпĕр» проект, 2022 ç.). Елена Есенцеван «Актриса» скульптура портречĕ Чăваш патшалăх художество музейĕн фондĕнче вырăн тупнă.

Елена Николаевна професси ăсталăхне ӳстерес тĕллевпе тĕрлĕ конкурссене, пултарулăх ĕçĕсен куравĕсене активлă хутшăнать, интереслĕ мастер-классем йĕркелет.

Унăн вĕренекенĕсем те хастар, округ, республика, Раççей шайĕнчи конкурссенче пĕрремĕш вырăнсем йышăнаççĕ. Вăрнарти чукун çул вокзалĕнче йĕркелекен куравсенче вĕсен ĕçĕсемпе паллашса киленме пулать. Паллă ӳнерçĕ, пирĕн ентеш, халĕ Питĕрте пурăнакан Алина Иванова-Хоняк та пултарулăхри пĕрремĕш утăмсене Елена Есенцева патĕнче тунă.

Пысăк награда илнĕ ятпа Елена Николаевнана ăшшăн саламлатпăр, малалла та çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕм-çитĕнӳсем патне ăнтăлма хавхалану, иксĕлми вăй-хал сунатпăр.

**Оксана СЕМЕНОВА**

# Ял-йыша спектакльпе савăнтарнă

КУЛЬТУРА

**Икĕ ялăн культура çурчĕ Çĕн Мĕлĕшпе Кив Мĕлĕш варринче ларать. Анчах унта çутă та курăнман, алăкĕсене питĕрнĕ, клуба тахçанах çын çӳременни сисĕннĕ.**

## ЫРĂ ТĔСЛĔХ

«Çумри ялсенче спектакльсем, концертсем кăтартаççĕ. Эпир мĕнрен кая, спектакль лартас», – тенĕ ялти активистсем. Анчах артистсене ăçтан тупмалла? Пĕрне сĕннĕ, теприпе калаçнă – çапла çичĕ çын килĕшекенни тупăннă.

Хастар ушкăн Н.Терентьевăн «Хĕрĕме калам – кинĕм илттĕр» камитне сцена çине кăларма тĕв тытать. Унта шăпах 7 артист кирлĕ пулнă: 2 арçынпа 5 хĕрарăм. Кĕçех хатĕрленӳ ĕçĕ пуçланнă. Хăйсен ролĕсемпе пурте хаваспах килĕшнĕ. Репетицисене пуçтарăнма тытăннă, вылява чăн пурнăçри пек илемлĕ тăвас тесе нумай тăрăшнă.

Крахьян рольне Алина Скворцована шаннă. Вăл питĕ тĕлĕнтернĕ ял çыннисене, хăйĕн сăнарне çав тери ĕнентерӳллĕ уçса панă. Халĕ те ăна: «Санăн больницăра ĕçлемелле мар, пысăк сцена çинче артистка пулмалла», – теççĕ.

Савали матки сăнарне Ольга Степанова калăпланă. 80 çула çитнĕ пенсионер ташласа та, юрласа та, шӳтлесе те тĕлĕнтернĕ.

Вира – Роза Муравьева – çамрăк хĕр сăнарĕ. Ăна вăл хăйне майлă илемлĕ уçса панă. Маюк – 20 çулти юрлама юратакан хĕр. Ун ролĕнче Надежда Степанова ăста пулнă. Хăйĕн ăшри туйăмĕсемпе куракансен асĕнче юлнă.

Мĕтри – йăваш кăмăллă, тĕреклĕ арçын. Ун сăнарне йышăнса Володя Осипов хăйĕн пултарулăхне маттур кăтартнă. Аслă судья – Елена Ивановна. Шăп-шăп вырăна ларнă судья, унăн ăс-тăнĕ те, шӳтĕ те пурте хăй вырăнĕнче. Ахмед – вĕри кавказ арçынĕ. Ăна Виталий Машанов сăнарланă. Кавказ калаçăвне те, ташшине те, вĕри чунне те кăтартма тăрăшнă.

Спектакле хатĕрлеме, ăна куракан патне çитерме пулăшакансене тав тăваççĕ артистсем. Акă, Галина Степанована – артистсен текстне тĕрĕслесе пынăшăн. Ялти Владимир Максимов тăрăшнипе вара кавказ юрри-ташшипе кĕвви, чăваш туй юррисем янрама пултарнă.

Сцена тумне вара хăйсен аллисемпе хатĕрленĕ: пĕри пĕр япала илсе килнĕ, тепри – теприне... Çавăн пекех территори пайĕн пуçлăхне М.С. Павловăна, Г.С. Герасимована тав сăмахĕ калаççĕ.

Спектакльпе ял-йыш валли Çĕнĕ çул парни тума шутланă. Декабрĕн 30-мĕшĕнче вырăнти артистсем хăйсен ĕçне халăх хаклавне кăларнă. Клубра лăк тулли çын пухăннă, ура çине тăма та вырăн пулман. Спектакль вĕçĕнче ырă сăмахсем калани, тăвăллă алă çупни тата чечек çыххисем кăмăла çĕкленĕ. Куракансем артистсене ырă кăмăл-туйăм парнеленĕшĕн мухтаса тав тунă.

# Аслă ăрурисен чĕринче манăçмасть

**Ĕлĕкрех çулталăкри анлă паллă тăвакан уявсене çынсем савăнăçлăн ирттернĕ. Уйрăмах – Сурхури, Çăварни, Мăнкун, Çимĕк йăлисене. Сурхури чух ачасем кашни киле кĕрсе тухнă. Сурăхĕсем така туччăр тесе урайне пăрçа сапатчĕç.**



## ЙĂЛА

Иртнĕ ĕмĕрте колхозсем вăрлăх суйлама килĕрен темиçешер михĕ валеçсе тухнă, мĕншĕн тесен сортлакан агрегатсем пулман. Çапла вара колхоз пăрçине ачасем Сурхури валли те илсе юлнă.

Пĕр çын та алăк питĕрмен, кил хуçисем кăмăлпах йышăннă, икерчĕпе е кукăльпе хăналаса янă. Çитĕннĕ çынсем е çамрăксем чăхсем тытса каçхине пӳрте илсе кĕнĕ, вĕсен умне темĕн те пĕр хурса панă: тырă, шыв, кăмрăк, куçкĕски тата кĕмĕл укçасем, кашнин хăйĕн пĕлтерĕшĕ пулнă. Каçхине чăхсен куçĕсем курсах каймаççĕ, сакай алăкне уçса панă. Чăх унталла кайсан пулас мăшăрăн ĕмĕрĕ кĕске пулать тенĕ. Кайăк-кĕшĕке урам алăкĕнчен те уçса кăларса янă: хăш еннелле утать, унталла качча тухать тенĕ.

Мăнкун çитсен чуччусем çакса çынсем таса шурă кĕпесем тăхăнса пуçтарăннă. Урам тулли ача савăнса вылянă. Пĕрле килĕштерсе пурăннă, праçниксене савăнса ирттерме пĕлнĕ. Вăрçă хыççăн пурнăç çăмăл пулман, çынсем мал еннелле пăхнă, çĕршыва ура çине тăратма вăйĕсене шеллемесĕр ĕçленĕ, алă вĕççĕн тунă. Турра ĕненнĕ. Аслă ăрурисен чĕринче иртни асрах.

Ватăсен халь пĕр ĕмĕт – пурте вăрçă чарăнасса, тӳпере мирлĕ пурнăç пуласса кĕтетпĕр, шанатпăр.

**Нина ПАРАМОНОВА**
Малтикас Ялтăра

РЕКЛАМА ОБЪЯВЛЕНИЯ РЕКЛАМА

**КУПИМ ДОРОГО** наряды из монет, иконы (дерево, латунь, серебро), церковные книги, кокошники, самовары, монеты серебряные, золотые (мелочь СССР), бумажные деньги, банкноты, купюры, картины, ПУХ, ПЕРО (перины, подушки). РОГА ЛОСЯ ДО 1300 за кг. РАДИОЛОМ ЛЮБОЙ (радиодетали, позолота платы серебро (любое), телевизоры, приборы и т.д.). Черный и цветной металл, холодильники, стир. маш., газ. плиты и т.д. Игрушки СССР, значки, книги, журналы, открытки, марки (СССР), винил. пластинки, кассеты, катушки, диски. Аппаратуру (магнитофоны, проигрыватели, усилители, колонки, радиолы, приемники и т.д.) дельта-с и подобные). Бижутерия, фотоаппараты, часы СССР и другие, шв. машинки, посуда СССР (стекло, хрусталь, фарфор, керамика). УТВАРЬ И ПРЕДМЕТЫ СТАРИНЫ (пивные кружки, статуэтки, бутыли, крынки, сундуки, прялки, сапоги, форму, ткань, домоткань, холст, пир, вышивки платья и т.д.). Муз. инст. (гармони, баяны, аккордеоны, гитары, балалайки и т.д.). МЕБЕЛЬ СТАРУЮ и многое другое. Приедем сами, оценка на месте. **Т. 89278520181. SKUPKA-21.ru**

### Извещение о проведения общего собрания участников долевой собственности

Извещаются участники общей долевой собственности на земельный участок из категории земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:09:230201:187, расположенный по адресу: Чувашская Республика –Чувашия, р-н Вурнарский, I поле 2 полевого севооборота и 4 рабочий участок I поля специального почвозащитного севооборта по карте ВХЗ колхоза им. Суворова от 1985г., о проведении общего собрания участников общей долевой собственности.

Общее собрание состоится 05.03.2025 года в 13час.00мин. в здании Тузисярмусской сельской библиотеки МБУК «ЦБС» Вурнарского муниципального округа Чувашской Республики по адресу: Вурнарский МО, д.Тузи-Сярмус, ул.Школьная, 34Б.

Повестка дня собрания:

1.Избрание председателя и секретаря общего собрания.

2.Избрание лица, уполномоченного от имени участников общей долевой собственности, без доверенности подавать и подписывать документы для выдела земельных долей, с правом сбора, оформления, подписания и предоставления всех необходимых приэтом документов, справок, свидетельств, проекта межевания, с правом и размещения объявлений в СМИ о выделе земельных долей, заключения соглашения при определении долей, представлять интересы по всем вопросам регистрации земельных долей и заключать договора аренды.

Участники долевой собственности для участия в общем собрании должны иметь при себе документы – оригиналы: паспорт и документы, удостоверяющие право собственности на земельную долю, а представители должны иметь доверенность.

Ознакомиться с документами по вопросам, внесенным на обсуждение, можно по рабочим дням с 10час. 00мин. до 16час. 00мин. в здании Тузисярмусской сельской библиотеки МБУК «ЦБС» Вурнарского муниципального округа Чувашской Республики по адресу: Вурнарский МО, д.Тузи-Сярмус, ул.Школьная, 34Б, сдаты выхода извещения о проведении собрания до даты проведения общего собрания.

### Извещение о проведения общего собрания участников долевой собственности

Извещаются участники общей долевой собственности на земельный участок из категории земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:09:230201:181, расположенный по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, р-н Вурнарский, западнее д. Тузи-Сярмус, раб. уч. № 7 поле № III специального (почвозащитного) севооборота и раб.уч. № 1 поле № V первого полевого севооборота по карте ВХЗ колхоза им.Суворова от 1985г., о проведении общего собрания участников общей долевой собственности.

Общее собрание состоится 04.03.2025 года в 13час.00мин. в здании Тузисярмусской сельской библиотеки МБУК «ЦБС» Вурнарского муниципального округа Чувашской Республики по адресу: Вурнарский МО, д.Тузи-Сярмус, ул.Школьная, 34Б.

Повестка дня собрания:

1.Избрание председателя и секретаря общего собрания.

2.Избрание лица, уполномоченного от имени участников общей долевой собственности, без доверенности подавать и подписывать документы для выдела земельных долей, с правом сбора, оформления, подписания и предоставления всех необходимых приэтом документов, справок, свидетельств, проекта межевания, с правом и размещения объявлений в СМИ о выделе земельных долей, заключения соглашения при определении долей, представлять интересы по всем вопросам регистрации земельных долей и заключать договора аренды.

Участники долевой собственности для участия в общем собрании должны иметь при себе документы – оригиналы: паспорт и документы, удостоверяющие право собственности на земельную долю, а представители должны иметь доверенность.

Ознакомиться с документами по вопросам, внесенным на обсуждение, можно по рабочим дням с 10час. 00мин. до 16час. 00мин. в здании Тузисярмусской сельской библиотеки МБУК «ЦБС» Вурнарского муниципального округа Чувашской Республики по адресу: Вурнарский МО, д.Тузи-Сярмус, ул.Школьная, 34Б, с даты выхода извещения о проведении собрания до даты проведения общего собрания.